**Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение**
**«Шоршелская средняя общеобразовательная школа**
**имени летчика-космонавта А.Г. Николаева»**
**Мариинско-Посадского района Чувашской Республики**

«РАССМОТРЕНО»
на заседании педагогического
совета
(протокол № 1 от 31.08. 2021 г.)

«УТВЕРЖДЕНО»
приказом № 59п.2
от 31.08. 2021 г.

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА
## по учебному предмету
## «Родной (чувашский) язык»
## 1 класс
## Базовый уровень

Составители: Сергеева Светлана Юрьевна и
Чумбакова Рена Германовна,
учителя начальных классов

**«СОГЛАСОВАНО»**
**Заместитель директора по УВР:**

**Г.П. Ефимова**
30.08. **2021 г.**

**2021 – 2022 учебный год**

## 1. Чăваш чĕлхи предметăн пулас результачĕсем. 1 класс

### 1.1. Харкам (личностные) результатсем:

***Вĕренекенĕн ҫакна пĕлмелле:***

- ачасем хăйсем вĕренекен пулнине ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхне уҫăмлани; ачасем тăван ҫĕршыв, тăван халăх, тăван чĕлхе ăнлавсене ăша хывни, хăйсем хăш халăх ывăл-хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуҫлани;
- ачасем таврари пурнăҫ, этем, ҫут ҫанталăк ҫинчен мĕн пĕлнине анлăлатни, тавракурăмĕ йĕркеленсе пыни;
- харпăр хăй хăтланăвĕсене сăнама-асăрхама, вĕсемшĕн яваплă пулма хăнăхса пыни;
- шкулта, класра, урамра, килте, хăнара хăвна мĕнле тытмаллине, уроксене мĕнле хатĕрленмеллине, ĕҫ вырăнне хатĕрлемеллине, парта хушшинче мĕнле лармаллине, ĕҫ хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине, ĕҫе тăрăшса, тимлĕ, тирпейлĕ тумаллине ăнланни;
- тимлĕх калăпăшĕ, пахалăхĕ, самантлăх, ятарлă тата ирĕклĕ астăвăмĕ аталанни;
- хайлавсенчи сăнарсен лайăх тата начар енĕсене шута илни.

***Вĕренекенĕн ҫакна тума пĕлмелле:***

- пĕчĕккĕн аслисемпе пĕрле ĕҫе хăнăхса пыма, пурнăҫра ҫак хăнăхусем кирлĕ пулассине ăнланма;
- ĕмĕтленни, вĕренни пурнăҫра кирлĕ пулние тавҫăма;.
- шкулта вĕренни пĕлӳ пухмалли, аталанмалли, харпăр хăй пурнăҫне кăсăклăрах, усăллăрах тума вĕренмелли тĕп мел пулнине ăша хума;
- ачан кăмăл-сипечĕ ҫырĕпленсе пыни: ваттисене хисеплемеллине, ҫынпа ырă пулмаллине, ҫынсем хушшинче хăвна мĕнле тытмаллине, чĕр чунсене юратмаллине ăнланса илме;
- шухăшлав ăслайĕсем туптама.

### 1.2. Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:

**Пĕлӳлĕх (познавательные)**

***Вĕренекенĕн ҫакна пĕлмелле:***

- ҫырнă чух мĕнле лармаллине тата ҫыру хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;
- таврари япаласемпе пулăмсем ҫинчен мĕн пĕлнине системăлани: «Тăван ҫĕр-шыв» ăнлава уҫăмлани. Вăл ҫуралнă вырăн, тăван ял, тавралăх, хăй пурăнакан республика тата ҫĕр-шыв (Раҫҫей) пулнине ăнланни, унăн культури, мухтавлă ҫыннисем ҫинчен пĕлни; ҫут ҫанталăк законĕсем, япаласемпе пулăмсем пĕр-пĕринпе ҫыхăнса аталаннине курни;
- тавралăх енĕсене, япалан вырăнне кăтартма, тавралăхри вырăнне палăртма пĕлни;
- япаласен пĕрпеклĕхне, уйрăмлăхне, вĕсем мĕнпе уйрăлса тăнине курма, палăртма пултарайни;
- ачан тавракурăмĕ анлăланни: ҫут ҫанталăкри пулăмсем, ҫулталăк вăхăчĕсем, ҫемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăҫĕ, ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен тĕплĕнрех пĕлни, тĕнче курăмĕ йĕркеленсе пыни.

***Вĕренекенĕн ҫакна тума пĕлмелле:***

- кирлĕ вăхăтра пулăшма, мĕн тумалла, мĕнле тумаллине тавҫăрма;
- пысăк, пĕчĕк, тан усăлăха курма, логикăллă шайлаштарма;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче кирлĕ материала шыраса тупма;
- вĕренӳ хатĕрĕсенче панă символсене, модельсене, схемăсене, паллăсене ăнланма.

**Йĕркелӳ-хаклав(регулятивные) результачĕсем**

***Вĕренекенĕн çакна пĕлмелле:***

- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне тищкерейни тата пахалайни;
- тишкерӳ-пĕтĕçтерӳ ĕçне хăнăхни, пĕтĕмĕшлине пайсем çине уйăрма, пайĕсене пĕтĕçтерме пĕлни;
- тĕрĕс курма, япаласен уçлăхри вырăнне палăртма пултарни;
- хăйĕн ĕçне вĕрентекен, юлташĕсем хакланине йышăнни;
- вĕрентекен, класпа пĕрле палăртнă задачăна татса памалли тĕрлĕ майсем тупни;
- хăвăн шухăшна ăнлантарса пама пултарни.

***Вĕренекенĕн çакна тума пĕлмелле:***

- йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма;
- ĕç йĕркине, мĕн хыççăн мĕн тумаллине, мĕншĕн ун пек тумаллине тавçăрма;
- ĕçĕн кашни тапхăрне вĕрентекен пулăшнипе хак парса пыма;
- харпăр хăй ĕçне планлама.

**Хутшăну (коммуникативные) результачĕсем**

***Вĕренекенĕн çакна пĕлмелле:***

- шухăша тĕрĕс те уçăмлă, çыхăнуллă каласа пама тăрăшни;
- ачан пуплевĕ, йăнăша курма, пĕр-пĕрне йăнăш тăвасран асăрхаттарма вĕренни;
- юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мĕн çинчен тата мĕнле сăмахсемпе усă курса калаçмаллине ăнкарни, кампа калаçнă чух, хăçан, мĕнле сăмахсемпе (сывлăх сунни, тав туни, сывпулашни) усă курмаллине тавçăрни;
- çывăх, хирĕçле, пĕр пĕлтерĕшлĕ, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕсрех, тарăнрах ăнланни, вĕсен ретĕнче кирлине суйласа илме пĕлни; ‹see note›
- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенире çирĕп йĕрке пуррине ăнланни;
- каласа парассин тĕрлĕ тĕсĕсене (калав, сăнлав, уйлав) пĕлни;
- хутшăну пуплевĕ (диалог) тытăмне, унти предложенисен хăй евĕрлĕхне (ытларах тулли мар предложенисем) пĕлни. Диалог шалашĕ пĕр темăна, пĕр тĕп шухăша пăхăнса тăнине ăнланни - сăмах йышĕ пуянланни;
- çынсем тĕрлĕрен шухăшлама пултарнине ăнланни.

***Вĕренекенĕн çакна тума пĕлмелле:***

- чăваш чĕлхинче сăмахсен предложенири çирĕп йĕркине пуплевре тытса пыма;
- калав темине, тĕп шухăшне палăртайни;
- калав тытăмĕпе уйрăмлăхĕсене курма, калавăн тĕрлĕ тĕсне йĕркелеме;
- текстпа ĕçлеме, вулани çинчен çыхăнуллă тата уçăмлă каласа пама;
- пĕр-пĕр япала, пулăм, ĕç çинчен çыхăнуллă, кирлĕ сăмахсемпе усă курса каласа пама;
- ушкăнпа ĕçлеме;
- хутшăну пуплевне тĕрлĕ пуплев ситуацийĕсенче усă курма.

**1.3 Предметăн пайрам (предметные) результачĕсем**

***Вĕренекенĕн çакна пĕлмелле:***

- «калав», «предложении», «сăмах», «хупă сасă», «уçă сасă» терминсене ăнланни, вĕсемпе пуплев тишкерĕвĕнче усă курайни; У, ХУ, УХ, ХУХ, УХХ, ХХУ, ХУХХ, ХХУХ (У – уçă сасă, Х – хупă сасă) сыпăклă чăваш сăмахĕсене, вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене уйрăмлăхĕсене пĕлсе тĕрĕс вулани;

• *йэ, йу, йа*сасăсен пĕрлешĕвĕсене *е, ю, я* сас паллисемпе паллă тунине, вĕсем икĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланни;текст ячĕ тăрăх текст содержанине тавçăрни;

• текста пайсем çине уйăрма, хатĕр планпа усă курса текст содержанине калама пĕлни;

• ĕлкисене (элеменчĕсене) кура сас паллисене ушкăнлани;

• сасăсемпе сас паллисем хушшинчи çыхăнăва асра хăварни, ăнланни.

***Вĕренекенĕн çакна тума пĕлмелле:***

• тăван чĕлхе тытăмне (текст, предложени, сăмах майлашăвĕ, сăмах, сыпăк, сасă), сăмахсене тĕрĕс калама, пусăм тĕрĕс лартма;

• текстсене, предложенисене, сăмахсене, сыпăксене, сасăсене схемăсемпе тата модельсемпе кăтартма;

• алăпа çырнă тата пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, 2-3 предложенирен тăракан текстсене пăхса çырса илме, çырнине çыру тетрадĕнчи текстпа танлаштарса тĕрĕслеме;

• сăмаха е предложение, текста вĕрентекенпе пĕрле тишкерейни, ун хыççăн вĕрентекен вуланă тăрăх çырма, çырнине пăхса тĕрĕслеме;

• пăтраштарса панă сас паллисенченсăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текстсем туса çырма;

• пăнчăсем вырăнне сăмахра кирлĕ сас паллисем, предложенисенче кирлĕ сăмахсем лартса çырма;

• ыйтусене хуравласа çырма;

• пуплеврен предложенисене, предложенирен сăмахсене, сăмахран сыпăксене, сыпăкран сасăсене (сас паллисене) уйăрма..

## 2. Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)

### Вулама-çырма вĕрентес умĕнхи тапхăр

***Вулама вĕренме хатĕрлесси.*** Пуплеве тимлĕн итлесси, сăнасси, ăнланасси, тишкересси: пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сыпăксене, сыпăкри сасăсене уйăрасси, сасăсене тĕрĕс каласси.

«Калав», «предложени», «сăмах», «сыпăк», «пусăм», «сасă», «хупă сасă», «уçă сасă» терминсемпе палашасси, вĕсемпе майĕпен пуплев тишкерĕвĕнче усă курасси. Кĕнекери калавсен, предложенисен, сăмахсен схемисене, уçă тата хупă сасăсене уйăрмалли паллисемпе (хĕрлĕçаврашка, кăвак тăваткал) паллашасси, вĕсемпе усă курасси.

«Шкул», «Класра», «Теттесемпе вăйăсем», «Шкул ачин кун йĕрки», «Тăван ял. Тăван кил-çурт», «Çемье», «Килти выльăх-чĕрлĕх», «Улма-çырла. Пахча çимĕç», «Уй-хирти тыр-пул», «Вăрманти чĕр чунсем», «Ӳт-пӳ пайĕсем», «Çарăк (юмах)» темăсемпе пĕр-пĕринпе калаçасси, ыйтусем парасси, хуравласси, пĕччен, е икшерĕн, е ушкăнпа çыхăнуллă калав йĕркелесси.

Куç умĕнчи, ӳкерчĕксенчи япаласем çинчен, çывăхра пулса иртекен ĕçсемпе пулăмсем çинчен калаçасси, вĕсем çинчен ыйтса пĕлесси, ыйтусене хуравласси, хатĕр планпа çыхăнуллă пĕчĕк калав тăвасси. Сăвăпăхмасăр вĕренесси, сăвă содержанийĕ тăрăх вĕçе-вĕçĕн пĕр-пĕрне ыйтусем парса хуравласси, сăвăран кирлĕ сăмахсене тупасси, сăвări йĕркесемпе усă курса пĕр-пĕр япалана, пулăма сăнласа парасси.

***Çырма вĕренме хатĕрлесси.*** Çырнă чухне тĕрĕс ларасси, çыру хатĕрĕсемпе усă курасси.

Çыру тетрачĕн страницисенче ĕç йĕркине, унăнваррине (çуррине), хушма йĕре курасси, çырнă чухнехи ал хусканăвĕсене (çӳлтен аялалла, аялтан çӳлелле, сулахайран сылтăмалла, сылтăмран сулахаялла) класпа, ретĕн-ретĕн, икшерĕн, пĕччен тăвасси.

Ĕлкесене палласа илесси, пĕр-пĕринчен уйăрасси. Чăваш алфавитĕнчи сас паллисен пайĕпе (тӳрĕ йĕр, çекĕл, авăнчăк чалăш йĕр, çурма ункă, ункă, икĕ вĕçлĕçекĕл, хупăçекĕл, йăлăллă тӳрĕ йĕр, йăлăллăçекĕл) паллашасси, вĕсене мĕнле çырмаллин йĕркине пĕлесси,

çырасси, пĕрне-пĕрин ĕçĕсене тăрĕслесси, хакласси, йăнăш тупсан, мĕнле тӳрлетмеллине ăнлантарасси.

Сас паллисен элеменчĕсене танлаштарасси, пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене асăрхасси, вĕсене ытти йĕрсем хушшинче шыраса тупасси.

Япаласем хушшинче ытлашшине тупасси, мĕншĕн ытлашши пулнине ăнлантарасси.

Пĕр-пĕр япала хатĕрлеме мĕн-мĕн кирлине суйласа илесси, çитменнине хушасси.

Тума пуçланăĕçе вĕçлесси.

**Сас паллисем вĕренмелли тапхăр**

***Вулама вĕрентесси***. Сăмахри (сыпăкри) сасăсене пĕр-пĕринпе сыпăнтарма вĕренесси.

Сăмахри сыпăксене тишкересси, сыпăк миçе сасăран тата мĕнле сасăсенчен тăнине, сыпăкри сасăсен вырăнне палăртасси.

*А, у. н, ă, л, х, м, р, ш, ы, в, с, ç, п* сас паллисемпе паллашасси, вĕсемпе усă курса тӳнтер тата тӳрĕ сыпăксене, сăмахсене вуласси.

*И, т, к, э, е(э), ĕ, ӳ, ч* сас паллисемпе, çемçелĕх паллипе*(ь)* паллашасси, пăзициллĕ вулав вăрттăнлăхне ăнкарасси, хытă тата çемçĕ хупă сасăллă сыпăксемпе сăмахсене танлаштарасси, вĕсене сас паллисемпе çырса тĕрĕс вуласси.

Сингармонизм сакунне пăхăнман сăмахсене вуласси.

*Й, е(йэ), ю(йу), я(йа)* сас паллисемпе, уйăракан паллăпа *(ь)* палашасси. *Й* хупă сасăпа тата вĕреннĕ уçă сасăсемпе усă курса тӳрĕ сыпăксем тăвасси, *йэ, йу, йа* сасăсен пĕрлешĕвĕсене çĕнĕ сас паллисемпе *(е, ю, я)* паллă тунине, *е, ю, я* сас паллисем икĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланасси.

У, ХУ, УХ, ХУХ, УХХ, ХХУ, ХУХХ, ХХУХ сыпăксене, вĕсенчен тăракан сăмахсене уйрăмлăхĕсене пĕлсе вулама вĕренесси.

Сас паллисене, сыпăксене, сăмахсене танлаштарасси.

Сăмахсене каялла, юлашки икĕ сас паллине ылмаштарса, сас палли хушса, пĕр сас паллине тепĕр сас паллипе улăштарса вуласси.

Тĕрлĕпĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе предложенисем тăвасси, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарасси.

***Çырма вĕрентесси.*** Чăваш афавитĕнчи сас паллисене, вĕсене ытти сас паллисемпе çыхăнтарса çырасси.

Сас палли çырас йĕркине ăнлантараса курăмлă кăтартасси, тишкересси (миçе тата мĕнле пайсенчен, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннă).

Сас паллисене çыхăнтармалли йĕрке, çав йĕркене астуса юласси.

Çĕнĕ сас паллине малтан вĕреннĕ сас паллисемпе çыхăнтармалли мелсене кăтартасси, вăл ытти сас паллисем умĕнче те, хыçĕнче те тăма пултарнине шута илесси. Çĕнĕ сас паллине вĕреннĕ сас паллисемпе сыпăкра, сăмахра, предложенире сыпăнтарса çырасси.

Çыхăнуллă пуплеме вĕренесси, тăван чĕлхен тытăмĕпе (текст, предложени сăмах майлашăвĕ, сăмах, сыпăк, сасă) паллашасси, сăмахсене тĕрĕс калама, пусăма тĕрĕс палăртма вĕренесси.

Текстсене, предложенисене, сăмахсене, сыпăксене, сасăсенеçыру тетрадĕнче схемăсемпе тата модельсемпе кăтартасси.

Виçĕ шайлă схемăсемпе (çӳлти пайĕнче – ӳкерчĕкри япалана пĕлтерекен сăмахăн сасă тытăмĕ, вăтам шайĕнче – пичет, аялта çыру сас паллийĕсемпе çырнă сăмахсем) ĕçлесси. Вĕреннĕ сас паллисене аса илессипе, кашни сас паллин ĕлкине астуса юлассипе, вĕреннĕ сас паллисене ушкăнлассипе, ачасене шухăшлав мелĕсемпе (тишкерме, танлаштарма, пĕтĕмлетме тата ытти те) паллаштарассипе, вĕсемпе усă курма вĕренессипе çыхăннă логика ĕçĕсене пурнăçласси.

Сас паллин пайĕсене палăртса, пĕр пек пайĕсене кăтартса, пĕр пек мар пайĕсене тупса, пĕр пек пайĕсене калăпăш, шучĕ, ăçта тата мĕнле вырнаçни енчен сăнаса икĕ сас паллине танлаштарасси. Çак йĕркепех сас паллисене ушкăнланă чухне усă курасси.

Пĕр-пĕр сас паллин пайĕсене ытти сас паллисенче тупасси.

Сасăсене илтес, уйăрас пултарулăха, вĕреннĕ сас паллисене çырас, вĕсене сыпăксенче, сăмахсенче тата предложенисенче çыхăнтарас ансат хăнăхусене аталантармалли хăнăхтарусем, çырса илмелли ĕçсем пурнăçласси.

Сас паллине çырас йĕркин алгоритмне тăвасси, унпа усă курасси.

**Сас паллисем вĕреннĕ хыççăнхи тапхăр**

***Текстпа çыхăннă ĕçсем.*** Çут çанталăк, çулталăк вăхăчĕсем, çемье, чĕр чунсем, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕçинчен çырнă текстсене тишкерме вĕренесси.

Текст ячĕ тăрăх текст содержанийĕçинчен калаçасси.

Çĕнĕ тата йывăр сăмахсене ăнланасси.

Текст темипе паллашасси, калаçасси.

Текст темипе килĕшӳллĕ хăйсем курни-илтни, пĕлни çинчен калаçасси.

Текста пайăн-пайăн вуласси, план тăвасси

Текст содержанийĕ тăрăх калаçасси, тĕп шухăшне палăртасси.

Творчествăллăĕçсем (пăтраштарса панă плана йĕркипе вырнаçтарасси, содержани тăрăх ӳкересси, ӳкерчĕксенчен диафильм йĕркелесси, инсценировка, сăмахлăӳкерчĕк тăвасси, текста малалла тăсасси тата ытти те) пурнăçласси.

Текстсен содержанийĕпе килĕшӳллĕ ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсемпе, тупмалли юмахсемпе ĕçлени.

Сăвăпа ĕçлес йĕркепе паллашсси, ăна пурнăçласси. Сăвва пăхмасăр вĕренесси.

Чăваш сăмахĕсен пулу мелĕсене, йĕркине ăнкарма сĕмленесси.

***Тĕрĕс çырма вĕренмелли ĕçсем.*** Сăмахсене пĕтĕмĕшле курма вĕренесси, вĕсене мĕнле çырнине асра тытма хăнăхасси.

Вĕреннĕ пур сас паллисене тепĕр хут аса илесси, элеменчĕсене кура вĕсене ушкăнласа çырасси.

Сас паллисенче панă элемента тупса йĕрлесси. Пĕр пек элемент пур сас паллисене çырса илесси.

Панă сас паллин элеменчĕсене ытти сас паллисенче тупса йĕрлесси.

Панă элементсемпе усă курса сас паллисем çырасси.

Алăпа çырнă тата пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, 2-3 предложенирен тăракан текста пăхса çырса илесси, çырнине çыру тетрадĕнчи текстпа танлаштарса тĕрĕслесси. Сăмаха е предложение, текста вĕрентекенпе пĕрле тишкересси, унтан вĕрентекен вуланă тăрăх çырасси, çырнине пăхса тĕрĕслесси.

Пăтраштарса панă сас паллисенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текстсем туса çырасси.

Пăнчăсем вырăнне сăмахра кирлĕ сас паллисем, предложенисенче кирлĕ сăмахсем лартса çырасси.

Ыйтусене хуравласа çырасси.

Пăхмасăр çырма хатĕрленесси.

**Тематика планĕ**

| №п/п | Раздел | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Вулама – çырма вĕрентес умĕнхи тапхăр | **8 сех.** |
| 2 | Сас паллисем вĕренмелли тапхăр | **41сех.** |
| 3 | Сас паллисем вĕреннĕ хыççăнхи тапхăр | **17 сех.** |
| | **Пурĕ:** | **66 сех.** |